Районти ӗҫпе тивӗҫтерекен центрта

# Ӗҫлекен валли ӗҫ пултӑр

**(Вӗҫӗ. Пуҫл. 1-мӗш стр.).**

Ҫулталӑк пуҫланнӑранпа профессие вӗренме 13 килӗшӳ тунӑ, заданипе 60 ҫынна вӗренме ямалла пулнӑ пулсан, 24 ҫынна вӗренме янӑ. 29 ҫын вӗренсе пӗтерчӗ, професси пӗлӗвӗ илнӗ хыҫҫӑн 25 ҫынна ӗҫе вырнаҫтартӑмӑр.

Ҫул ҫитмен ҫамрӑксене ӗҫпе тивӗҫтересси те хальхи вӑхӑтра пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Ку енӗпе 3 килӗшӳ турӑмӑр. Вӗсенче ҫул ҫитмен ҫамрӑксем 184 ӗҫлерӗҫ. Вӗренекенсенчен ытларахӑшӗ Калайкасси тата Чуманкасси шкулӗсенче юсав ӗҫӗсене пурнӑҫланӑ ҫӗрте тӑрӑшрӗ.

Пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсенче, ытти предприятисемпе организацисенче хальхи вӑхӑтра кирлӗ специалистсем ҫитменни вӑрттӑнлӑх мар. Акӑ Суворов яч. хис. хуҫалӑха ҫак кунсенчех ветфельдшер, «Оринино» хуҫалӑха ветфельдшер, автомашина водителӗ, чашӑк-тирӗк ҫӑвакан, тракторист, районти 2-мӗш номерлӗ больницӑна врач-лаборант, функционаллӑ диагностика врачӗ, Шомикри психоневрологи интернатне врач-терапевт, ӗҫ тумтирне ҫӑвакан тата юсакан машинист, медицина сестри, Чапаев яч. хис. хуҫалӑха тӗп зоотехник, электрогазосварщик, «АлАн» обществӑна кухньӑра ӗҫлекен, Терентьев предпринимателе автомашинӑсем юсакан слесарь кирлӗ.

Пӗтӗмпе ӗҫпе тивӗҫтерессин ыйтӑвӗсене пурнӑҫлама 810 пин тенкӗ тӑкакларӑмӑр. Январь уйӑхӗнчен тытӑнса май уйӑхӗн ҫурриччен 1753,8 пин тенкӗ пособи, 65,1 пин тенкӗ стипенди, 158 пин тенкӗ вӑхӑт ҫитмесӗрех пенси тӳленӗ.

Ҫынсене ӗҫпе тивӗҫтерессипе хушма мерӑсем йышӑннӑ май района 12 миллион та 16 пин тенкӗлӗх 733 вырӑн уйӑрса панӑ. Вӑл шутран район администрацийӗпе килӗшсе тӑрук ӗҫрен хӑтарнисем пулассине палӑртса 7 миллион та 320 пин тенкӗлӗх 446 ӗҫ вырӑнӗ палӑртнӑ.

Эпир 13 шкулпа ача сачӗсене, «Пурӑнмалли ҫуртйӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑхӑн ертсе пыракан компанийӗ» обществӑна, районти тӗп больницӑна, хуҫалӑхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацине, «Моргаушавтотехсервис» обществӑна тата «Ударник» хуҫалӑха укҫа-тенкӗ куҫарса патӑмӑр.

Кунпа пӗрлех хӑйсем валли хӑйсем ӗҫ тупассипе ӗҫлеме тытӑнтӑмӑр. Ҫавна валли 145 пин тенкӗ уйӑрса панӑ. Ӗҫсӗррисенчен тӑваттӑшӗ ку енӗпе ӗҫлеме кӑмӑл турӗ. Программӑна хутшӑнакансенчен иккӗшӗ ҫӑм арлассипе тата пыл хурчӗсем ӗрчетессипе техникӑпа экономика кӑтартӑвӗсене хатӗрлесе пачӗҫ.

Ӗҫсӗрлӗх ыйтӑвӗ хальхи вӑхӑтра чылай ҫыншӑн пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулса тӑрать. Ӑна ӑнӑҫлӑ татса пани пирӗншӗн кӑна мар, пуриншӗн те усӑллӑ пулӗ тесе шутлатпӑр.

**Т. АНТОНОВА,**
**районти ӗҫпе тивӗҫтерекен центр ертӳҫи.**

Ӗҫ укҫин ыйтӑвӗсемпе

# Ӗҫленине кура ӗҫ укҫи тӳлемелле

Чӑвашстат пӗтӗмлетнӗ кӑтартусем тӑрӑх 2009 ҫулхи майӑн 1-мӗшӗ тӗлне районти организацисенче ӗҫлекенсен уйӑхри вӑтам ӗҫ укҫи 7907 тенкӗпе танлашрӗ е иртнӗ ҫулхи ҫав вӑхӑтринчен 1 процент чакрӗ. Республикипе вӑтам кӑтарту 10709,9 тенкӗпе танлашать. Ӗҫ укҫин виҫи енӗпе пирӗн район республикӑра 5-мӗш вырӑн йышӑнать. Чи пысӑк ӗҫ укҫи Красноармейски районӗнче (13139 тенкӗ) тата чи пӗчӗкки Улатӑр районӗнче (6350 тенкӗ).

Экономика кризисӗ ытларах продукци тирпейлекен производство ҫине витӗм кӳчӗ. Ку отрасльте ӗҫ укҫи фончӗ кӑҫалхи 1-мӗш кварталта 10471,6 пин тенкӗ пулчӗ е иртнӗ ҫулхи ҫав вӑхӑтринчен 3,4 хут сахалрах. Ӗҫлекенсен уйӑхри вӑтам ӗҫ укҫи 7671 тенкӗпе танлашрӗ, пӗлтӗр вӑл 21411 тенкӗ пулнӑччӗ.

Экономика ӗҫӗ-хӗлӗн ытти енӗсемпе ӗҫ укҫи шайӗ ӳсни палӑрать. Ял хуҫалӑхӗнче вӑл 23 процент, строительствӑра 31 процент, ваккӑн тавар сутнӑ ҫӗрте 15 процент, финанс ӗҫӗ-хӗлӗнче 18 процент, вӗрентӳ ӗҫӗнче 27 процент, сывлӑха сыхлас ӗҫре 0,9 процент, коммуналлӑ тата социаллӑ услугӑсем панӑ ҫӗрте 35 процент ӳснӗ.

Районти налук инспекцийӗн службин даннӑйӗсем тӑрӑх районти 26 организацире ӗҫлекенсене ӗҫ укҫи пурӑнма кирлӗ минимумран та сахал тӳлеҫҫӗ. 2009 ҫулхи 1-мӗш кварталта ку минимум пирӗн республикӑпа 4586 тенкӗпе танлашрӗ. Сахал ӗҫ укҫи тӳлекенсем шутӗнче ял хуҫалӑх, культура тата вӗрентӳ организацийӗсем.

Уйрӑмах ял хуҫалӑхӗнче ӗҫ укҫи пӗчӗкки палӑрать. Кӑҫалхи 1-мӗш кварталта вӑл вӑтамран 5393 тенкӗпе танлашрӗ. Районӑн вӑтам кӑтартӑвӗнчен вӑл 46 процент пӗчӗкрех. «Рассвет», «Лидер», Ленин яч. хис., «ВТМ», «Свобода» хуҫалӑхсенче ӗҫлекенсен уйӑхри вӑтам ӗҫ укҫи 4000 тенкӗне те ҫитмест.

Вӗрентӳ ӗҫченӗсен уйӑхри вӑтам ӗҫ укҫи 7014 тенкӗпе танлашрӗ. Вӑл шутран шкул ҫулне ҫитмен ача-пӑча учрежденийӗсенче 5574 тенкӗ.

Культура отраслӗнче уйӑхри вӑтам ӗҫ укҫи 5379 тенкӗпе тан пулчӗ. Ҫав шутран клуб учрежденийӗсен ӗҫченӗсен вӑл 5200 тенкӗ.

Пӗчӗк тата вӑтам предпринимательство предприятийӗсенчен хӑшӗсенче ӗҫ укҫи пӗчӗк пулни палӑрать («Ветеран» ПКФ ООО – 2400 тенкӗ, «Доц» ООО – 2726 тенкӗ, «Алиса» ООО – 2924 тенкӗ, «Моргаушрайбыт» ООО – 3080 тенкӗ, «Трасса – М7» ООО – 3305 тенкӗ, «Никита» ООО – 3427 тенкӗ). Ҫакӑн пек ӗҫ укҫи илекенсем вӑхӑтлӑх ӗҫлейменшӗн пособи, отпуск кунӗсемшӗн ӗҫ укҫи, кредитсем тулли виҫепе илме пултараймаҫҫӗ. Ӗҫ паракан ӗҫ укҫине «конвертсемпе» тӳлет пулсан та хӑйсен ҫыннисен тивӗҫлӗ пенси илмелли майӗсене пӗтерет. Мӗншӗн тесен Пенси фондне укҫа куҫмасть.

Чӑвашстат даннӑйӗсем тӑрӑх ӗҫ укҫи енӗпе парӑм майӑн 1-мӗшӗ тӗлне районӗпе 310 пин тенкӗпе танлашать. Ӗҫ укҫи илсе ҫитерейменнисем 107 ҫын. Ку парӑм Муркашри кирпӗч заводӗнче пулнӑ, ҫак вӑхӑта парӑма парса татнӑ ӗнтӗ.

Организацисенчи ӗҫ укҫи шайне ӳстерессипе эпир тивӗҫлӗ мерӗсем йышӑнмастпӑр мар. Пӗчӗк тата вӑтам предпринимательство, суту-илӳ, обществӑлла апатлану, йӑла ыйтӑвӗсене тивӗҫтерекен предприятисен ертӳҫисемпе тӑтӑшах тӗл пулма тивет. Ведомоҫпе палӑртмасӑр ӗҫ укҫи тӳлени ҫынсене епле сиен кӳни пирки ӑнлантарса паратпӑр. Кунпа пӗрлех ӗҫ законодательстви тата ӗҫ укҫи тӳлессин ыйтӑвӗсемпе ертӳҫӗсене вӗрентессине те йӗркеленӗ. Ҫакӑ пӗтӗмпех ӗҫ ҫыннисемшӗн.

**Э. СИМАКОВА,**
**район администрацийӗн экономика пайӗн пуҫлӑхӗ.**

Наркотиксемпе усӑ курассине хирӗҫ кӗрешекен комисси ларӑвӗнчен

# Шанӑҫ пур: совеҫе ӗҫсех ярайман-ха...

– Наркотиксемпе усӑ куракансене ҫӗнӗрен тупса палӑртман, – наркотиксемпе усӑ курассине хирӗҫ кӗрешекен районти комиссин нумаях пулмасть иртнӗ ларӑвӗнче районти шалти ӗҫсен пайӗн криминаллӑ милици пуҫлӑхӗн тивӗҫӗсене туса пыракан О. Потряковӑн ҫак сӑмахӗсем кӑшт лӑплантараҫҫӗ пек. Пӗтӗмпех мар. Учетра тӑракан 2 наркоманпа унпа усӑ куракан 4 ҫынран 3-шӗ тӗрмере лараҫҫӗ, вӗсем ыттисем ҫине витӗм кӳмеҫҫӗ, тесе те лӑш! сывлама ҫук. Тепӗр виҫҫӗшӗн витӗмне ҫамрӑксем лекмеҫҫӗ, тесе те кам шантарма пултарать тата? Никам та. Апла пулсан паян профилактика ӗҫне тӗпе хуни тӗп-тӗрӗс пулать. Ку енӗпе вара районти тӗп больница та, шкулсем те хӑйсенчен килнине йӑлтах тума тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫулталӑкне икӗ хутчен «Ҫамрӑксем – сывӑ пурнӑҫ йӗркишӗн» акци иртет, шкул ачисемпе ирттерекен калаҫусемпе тренингсем те вӗренекенсене наркотиксемпе алкоголь сиенӗ ҫинчен ӑнланма пулӑшмалла пек.

Анчах та, районти вӗрентӳ, ҫамрӑксен политики, физкультурӑпа спорт пайӗн пуҫлӑхӗ З.Ю. Дипломатова палӑртнӑ пек, ку енӗпе пурне те туса ҫитеретпӗр, теме ҫук пулӗ. Класс ертӳҫисене илес пулсан та, вӗсенчен кашниех хӑйӗн класӗнчи кашни ачашӑн яваплӑ пулнине кашни самантра туйса тӑмалла. Ку енӗпе хӑйсен тивӗҫне ҫирӗп пурнӑҫламалла. Мӗншӗн тесен паян ҫул ҫитмен ҫамрӑксем, ҫав шутран шкул ачисем те эрех-сӑра тутаннӑ тӗслӗхсем тӗл пулаҫҫӗ. Ҫапла майпа вӗсем преступлени тӑвас ҫулран та инҫе тӑмаҫҫӗ. Кунта район пуҫлӑхӗн, асӑннӑ комисси председателӗн Ю.А. Ивановӑн шухӑшне илсе кӑтартас килет:

– Пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн пирӗн Германинчи опыта пурнӑҫа кӗртме пуҫламалла. Унта ҫул ҫитмен ҫамрӑк преступлени турӗ пулсан, ҫак пулӑм унӑн пӗтӗм пуласлӑхӗ ҫине витӗм кӳрет, – терӗ вӑл. – Ачан психологи уйрӑмлӑхне тӗпе хурса, вӗсене тӗрӗс мар утӑмран сыхланма пулӑшакан методика хатӗрлени вырӑнлӑ пулмалла. Ача пӗрпӗр йӑнӑш утӑм тӑвиччен тарӑннӑн шутлатӑр: ку утӑм мана кайран ӑҫтан пырса ҫапма пултарать-ха, тесе.

Ҫакӑн ҫинченех ашшӗ-амӑшӗсене те шухӑшлаттарас килет.

– Эп эрехе хыпса лартӑпха, ҫакӑ ача ҫине, унӑн пуласлӑхӗ ҫине мӗнле витӗм кӳрӗ? – тесе шутланӑнах туйӑнмасть хальлӗхе хӑйсем ҫуратнӑ ачисене мансах эрехе иленнисем. С.Н. Иванов ларура палӑртнӑ тӑрӑх, Йӳҫкасси ял тӑрӑхӗнче те ҫакӑн пек 5 ҫемье учетра тӑрать. Чуманкасси ял тӑрӑхӗнче те 11 кун пек ҫемьесем. Кашни ял тӑрӑхӗнчех пур вӗсем. Ял тӑрӑхӗсенчи ҫемьесемпе ӗҫлекен комисси членӗсем килсене тӑтӑш тухса ҫӳренин, ҫакӑн пек тӗслӗхсене асӑннӑ комисси ларӑвӗсенче, ялти пухусенче пӑхса тухнин витӗмӗ пурпӗрех пур. Ял ҫынни, телее, намӑс туйӑмне ӗҫсех ярайман-ха. Ҫакӑн ҫинчен калаҫҫӗ те малтан эрехпе иртӗхнӗ хӗрарӑмсемпе арҫынсем ҫак сиенлӗ йӑларан уйрӑлса ҫемье ҫинчен шутлани те.

Анчах та магазин е кафе умӗнче пӗр ҫынсемех кунӗпех «хуралта» тӑни те профилактика ӗҫӗ ҫителӗксӗрри ҫинчен калать пулӗ. Сергей Николаевичӑн сӑмахӗнчен ҫакӑ курӑнать: Йӳҫкассинчи барта та ҫакӑн пек ӳкерчӗкех. Ку заведени халӗ каҫхи 10 сехетчен ӗҫлет.

Тӗрӗссипе, ҫакӑн пек кафебарсене ҫынсем пушӑ вӑхӑта йӗркеллӗ, усӑллӑ ирттерччӗр тесе тунӑ. Район пуҫлӑхӗ палӑртнӑ пек, вӗсене хупни проблемӑна татса пани пулмӗ. Эрех шыракан ӑна тепӗр ҫӗрте тупать. Анчах та кунта ҫак вырӑнсенче ӗҫлекенсен ответлӑхӗ ҫинчен аса илтерни вырӑнлах пуль. Кафе ӗҫлет пулсан, унта йӗркелӗх пулмалла. Шкул ачисемшӗн япӑх тӗслӗх илмелли вырӑн ан пултӑр вӑл. Унта кирек кама та кӗме кӑмӑллӑ пултӑр. Апла мар пулсан, чӑннипех те, вӗсене хупас ыйту та ӑнсӑртран кӗмсӗрт! сиксе тухнӑ ыйту пулмӗ. Эрехпе иртӗхессине хирӗҫ кӗрешессинче пӗр ыйту та ячӗшӗн ҫеҫ пулма пултараймасть. Мӗншӗн тесен тӗрлӗрен психотроплӑ веществосемпе усӑ курасси те эрехпе иртӗхнинченех пуҫланма пултарать. Ҫитӗнекен ӑру хамӑртан ырӑ тӗслӗх илтӗр тесен, хамӑра йӗркеллӗ тытмалла пирӗн. Кафесенче те, килте те, ытти обществӑлла вырӑнсенче те. Ҫакӑ кашниех тума пултаракан профилактика утӑмӗ пулать те. Ӑна валли укҫа кирлӗ мар, ҫынлӑх кирлӗ. Вӑл вара пирӗнте пурӑнать-ха.

**Л.ПАВЛОВА.**

**ПРОГРАММА**
**Чебоксарского международного кинофестиваля**
**1-6 июня 2009 года**

**1 июня, понедельник**

**ДК им. П.П. Хузангая** *(г.Чебоксары, ул. З.Яковлевой, д.54а)*
**9.30.** Детская программа. М/ф «Вини-Пух»
**10.30.** Детская программа. М/ф «Золотые рога»
Дворец культуры «Салют»
(г. Чебоксары, ул. Энтузиастов, д.36/9)
**10.00.** Детская программа. Участвует актер Юрий Чернов. Х/ф «Принцесса и павлин».
**Кинозал Государственного архива электронной и кинодокументации Чувашской Республики** *(пр. И.Яковлева, д. 12а, II этаж*)
**10.00.** Детская программа. Х/ф «Сказ про то, как царь Петр Арапа женил»
**14.00.** Страницы истории Отечества. «Всегда непобедимым остался» (А.В. Суворов), «Родина, мужество, честь» (Об истории Российского флота)
**Дворец культуры тракторостроителей**
*(г. Чебоксары, Эгерский бульвар, д.36)*
**10.00.** Развлекательно-познавательная программа, посвященная Международному Дню защиты детей
**Дворец культуры «Акация»** *(п.Лапсары, ул.Совхозная. д.3)*
**10.00.** Детская программа. М/ф «Алеша Попович и Тугарин-змей»
**Кинотеатр «Атёл»**
*(г.Новочебоксарск, ул. Винокурова, д.42, большой зал)*
**10.00.** Детская программа. М/ф «Вверх»
**18.00.** Из цикла «Возвращенные шедевры». Х/ф «Война и мир» (1 с.)
Представляет актриса, народная артистка России **Ирина Скобцева-Бондарчук**
**Кинотеатр «Мир Луксор»** *(г.Чебоксары, пр. Ленина, д.23)*
**11.00.** Детский праздник «Жизнь замечательных детей»
**12.00. Открытие детской программы кинофестиваля** с участием артистов и гостей кинофестиваля. М/ф «Гора самоцветов». Представляет актер **Юрий Чернов**
**21.30.** Международная панорама фильмов «Другое кино». Программа короткометражных фильмов «Братья и Кролики» (Голландия)
**Национальная библиотека Чувашской Республики**
(г.Чебоксары, пр. Ленина, д.15)
**12.00.** Пресс-конференция организаторов Чебоксарского международного кинофестиваля
**18.30.** Кинематографические земляки. Режиссер Александр Хван. Х/ф «Дюба-Дюба». Представляет кинорежиссер **Александр Хван.**
**Красная площадь**
**14.00.** Театрализованная детская программа «Карнавал на острове Детства», посвященная Международному дню защиты детей

**2 июня, вторник**

**Кинотеатр «Мир Луксор»** *(г.Чебоксары, пр. Ленина, д.23)*
**09.00.** Детская программа. Х/ф «Невинные создания». Представляет режиссер **Юрий Бердников**
**21.30.** Международная панорама фильмов «Другое кино». Х/ф «Молчание Лорны» (Швеция)
**ДК им. П.П. Хузангая** *(г.Чебоксары, ул. З.Яковлевой, д.54а)*
**9.30.** Детская программа. М/ф «Летучий корабль», «Дудочка и кувшинчик»
**10.10**. Детская программа. М/ф «Аленький цветочек»
**Дворец культуры «Салют»** *(г. Чебоксары, ул. Энтузиастов, д.36/9)*
**10.00.** Детская программа. Х/ф «Лебединое озеро»
**14.00.** Ретроспективный показ. Х/ф «Завещание императора». Представляют кинорежиссер, народная артистка Российской Федерации **Светлана Дружинина** и кинооператор, лауреат Государственной премии СССР, народный артист Российской Федерации **Анатолий Мукасей**
**Кинозал Государственного архива электронной и кинодокументации Чувашской Республики** *(г.Чебоксары, пр. И.Яковлева, д. 12а, II этаж*)
**10.00.** Детская программа. Х/ф «Богдан Хмельницкий»
**14.00.** Столпы Российской державы. Д/ф «Петр Великий», «АлександрII»
**Дворец культуры тракторостроителей**
*(г. Чебоксары, Эгерский бульвар, д.36)*
**10.00.** Детская программа. М/ф «Добрыня Никитич и Змей Горыныч»
**Дворец культуры «Акация»** (г.Чебоксары, п.Лапсары, ул.Совхозная. д.3)
**10.00.** Детская программа. Х/ф «Иваново детство»
**Кинотеатр «Атёл»**
(г.Новочебоксарск, ул. Винокурова, д.42, большой зал)
**10.00.** Детская программа. Х/ф «Дюймовочка». Представляет актер **Виктор Бычков**
**18.00.** Из цикла «Возвращенные шедевры». Х/ф «Война и мир» (2серия)
**Национальная библиотека Чувашской Республики**
(г.Чебоксары, пр. Ленина, д.15)
**12.00.** Пресс-конференция участников и гостей кинофестиваля
**15.00.** Конкурс. Фильмы студии «Интернэшнл», г. Москва
**18.30.** Кинематографические земляки. Актер, педагог Павел Романов. Х/ф «Последний поезд». Представляет кинорежиссер **Алексей Герман младший.**
**Кинотеатр «Сеспель»** (г. Чебоксары, Московский пр., д.33/9)
**15.00.** Конкурс. Х/ф «Русский треугольник» (Грузия-Украина). Представляет продюсер **Арчил Геловани**
**19.00. Торжественная церемония открытия Чебоксарского международного кинофестиваля.**
**20.00.** Фильм открытия. Х/ф «Чужие» (Россия-Египет-США). Представляет режиссер **Юрий Грымов и** актер **Виктор Бычков**

**3 июня, среда**

**Кинотеатр «Мир Луксор»** *(г.Чебоксары, пр. Ленина, д.23)*
**09.00.** Детская программа. Х/ф «Золушка 4х4. Все начинается с желаний». Представляет киноактер **Александр Головин**
**21.30.** Международная панорама фильмов «Другое кино».
Х/ф «Полурусская история» (Израиль)
**ДК им. П.П. Хузангая** (г.Чебоксары, ул. З.Яковлевой, д.54а)
**9.30.** Детская программа. М/ф «Цветик-семицветик»
**10.10.** Детская программа. Х/ф «Там, на неведомых дорожках»
**Дворец культуры «Салют»** *(г. Чебоксары, ул. Энтузиастов, д.36/9)*
**10.00.** Детская программа. Х/ф «Золушка 4х4. Все начинается с желаний». Представляет **киноактер Александр Головин**
**14.00.** Ретроспективный показ. Х/ф «Завещание императрицы»
**Кинозал Государственного архива электронной и кинодокументации Чувашской Республики** *(г.Чебоксары, пр. И.Яковлева, д. 12а, II этаж*)
**10.00.** Детская программа. Х/ф «Гусарская баллада»
**14.00.** Столпы Российской державы. Д/ф «Последний император России»
**Дворец культуры тракторостроителей**
*(г. Чебоксары, Эгерский бульвар, д.36)*
**10.00.** Детская программа. Журналы «Ералаш»
**Дворец культуры «Акация»**
*(г.Чебоксары, п.Лапсары, ул.Совхозная. д.3)*
**10.00**. Детская программа. Х/ф «Повесть о настоящем человеке»
**Кинотеатр «Атёл»**
*(г.Новочебоксарск, ул. Винокурова, д.42, большой зал)*
**10.00**. Детская программа. Х/ф «Невинные создания». Представляет режиссер **Юрий Бердников**
**18.00.** Из цикла «Возвращенные шедевры». Х/ф «Война и мир» (3 с.)
**Национальная библиотека Чувашской Республики**
*(г.Чебоксары, пр. Ленина, д.15)*
**12.00.** Пресс-конференция участников и гостей кинофестиваля
**13.00.** Пресс-конференция участников и гостей кинофестиваля
**15.00**. Конкурс. Фильмы студии «Азия-фильм», г. Новосибирск
**18.30.** Кинематографические земляки. Народный артист СССР Николай Мордвинов. Х/ф «Богдан Хмельницкий». Представляет кинокритик **Сергей Тримбач** (Украина)
**Кинотеатр «Сеспель»** *(г. Чебоксары, Московский пр., д.33/9)*
**15.00.** Конкурс. Х/ф «Подарок Сталину» (Казахстан-Россия-Израиль). Представляет режиссер **Рустем Абдрашев**
**17.20.** Панорама российских фильмов. Х/ф «Бумажный солдат». Представляет режиссер **Алексей Герман-младший**
**19.30.** Панорама российских фильмов Х/ф «Андерсен. Жизнь без любви». Представляет кинорежиссер и сценарист, народный артист СССР **Эльдар Рязанов**
**Чувашский государственный институт культуры и искусств**
*(г.Чебоксары, ул. Энтузиастов, д.26)*
**13.30.** Х/ф «Чужие». Мастер-класс кинорежиссера **Юрия Грымова**

**(Окончание в следующем номере).**